Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

74 (8035) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ачасемшĕн ырми-канми тăрăшакансем



***Раиса Алексеевна Петровăпа Зоя Витальевна Федорова Йӳçкассинчи «Василек» ача садĕнче вăй хураççĕ. Иккĕшĕн те ĕç опычĕ пысăк. Зоя Витальевнăн педагог стажĕ 25 çул. Раиса Алексеевна та 23 çул ачасене воспитани парассипе тăрăшать. Ачасене ăнланма вĕренсе çитнĕскерсем шăпăрлансем сывлăхлă та тĕрлĕ енлĕн аталанса ӳсчĕр тесе тăрăшаççĕ. Вĕсене тăван ене хаклама, илемлĕхе упрама хăнăхтарса пыраççĕ.***

***Илемлĕх тенĕрен, Йӳçкассинчи ача сачĕн картишĕ кунта килекен кашни ачана кăна мар, аслă ăрури çынна та тыткăнлать. Ачасене воспитани парассипе пĕрлех тирпей-илем кĕртессинче те маттур «Василексем».***

Юлашки çулсенче районти ытти ача сачĕсем те ку тĕлĕшпе малалла талпăнни курăнать. Кашни ача сачĕн картишĕ хăйне евĕр юмах тĕнчи тейĕн. Пурĕ вара паян районта 15 ача сачĕ, 4 пуçламăш шкул-ача сачĕ. Кунсăр пуçне шкулсем çумĕнче тепĕр 14 ушкăн ĕçлет.

Районти 150 воспитатель, вĕсем хушшинче логопедсем те, ытти педагогсем те, кашни кунах ачасене кирлĕ пек аталантарас тесе ырми-канми тăрăшаççĕ. Ĕçре тĕрлĕ майсемпе усă куракан скерсем, çĕнĕлĕхсене алла илнипе пĕрлех хăйсен ăсталăхне те тăтăшах ӳстерсе пыраççĕ. Тĕрлĕ грантсем çĕнсе илеççĕ, республика конкурсĕсенче пултарулăхпа палăраççĕ, пĕчĕк ачасене те тĕрлĕ мероприятисене хутшăнма хавхалантараççĕ. Хăйсен пысăк ĕçне – пĕчĕк ачаран çын тăвассине – тивĕçлĕ пурнăçлаççĕ вĕсем.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Ыран – Воспитатель кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ ПЕДАГОГСЕМ, АЧА САЧĔСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ, ШКУЛЧЧЕНХИ ВĔРЕНТӲВĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те профессиллĕ уявпа – Воспитатель тата шкулччченхи учрежденисенче ĕçлекенсен кунĕпе – саламлатăп! Сирĕн ĕç вăл пĕлӳ паракансăн профессийĕ кăна мар, вăл пысăк мисси – çынра çын тенине çирĕплетесси. Сирĕн ĕç ăнăçлăхĕ вара эсир ача аталанăвĕн шкулччченхи тапхăрĕ ответлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланнинче. Ачасен çак вăхăт телейлĕ те тулли савăнăçлă пулнинчен, ачасен аталанăвĕнчен пирĕн районăн, çĕр-шывăн пуласлăхĕ те килет.

Эсир ачасен пултарулăхне уçса пама пĕлетĕр, вĕсене пĕлӳ тĕнчине утма хавхалантаратăр, ĕçлеме вĕрентетĕр, çирĕп, ырă кăмăллă пулма, ума тĕллевсем лартма хăнăхтаратăр, çĕр-шыва юратма вĕрентсе пыратăр. Сирĕнте çакăн пек тĕлĕнмелле талант пур.

Сирĕн ăш пиллĕх, ырă кăмăл, пуçарулăх ача садне çӳрекен шăпăрлансен кашни кунне савăнăçлă та телейлĕ тума пулăшаççĕ.

Сире, шкулччченхи вĕрентӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсене, ачасене юратнăшăн, педагогика ăсталăхĕшĕн, ачасене ырă туйăмсем тата çыннăн паха енĕсене аталантарнăшăн чĕререн тав сăмахĕ калатăп.

Професиллĕ уявпа саламласа сире çирĕп сывлăх, телей, ĕçре ăнăçусем, пуçарулăх тата ачасен юратăвне сунатăп.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

**Республикăра**

## Нумай ачаллисем пулăшăва тивĕçĕç

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2012 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 77-мĕш Указне улшăнусем кĕртесси çинчен» указа алă пуснă.**

Асăннă документпа килĕшӳллĕн 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен патшалăх пулăшăвне нумай ачаллă, çын пуçне пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен сахалрах тупăш тивекен çемьесем кăна мар, нумай ачаллă, пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен пысăкрах, анчах Чăваш Республикинче пурăнакансен вăтам тупăш шутĕнчен пĕчĕкрех тупăшлă çемьесем те илĕç.

Апла пулсан республикăри 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен 3-мĕш тата ун хыççăнхи ача çуралакан çемьесен 100 процентĕ тенĕ пекех тӳлев илме тытăнĕ.

Уйăхсерен паракан тӳлев валли федераци тата республика бюджечĕсенчен укça уйăрса парĕç. РФ субъекчĕн тăкак обязательствине тивĕçтермелли виçе 2013 çулта кирлĕ укçан 90 таран процентне танлашĕ, кайран 2018 çул тĕлне РФ субъекчĕн хăйĕн тӳпи 50 процент таран пысăкланмалла.

Çак указа пурнăçлама 2013 çулта 120,5 млн тенкĕ кирлĕ, 2014–2015 çулсенче – 368,5 млн яхăн тата 654,5 млн тенкĕ.

## Мускав спорта аталантарас тĕллевлĕ

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев иртнĕ эрне кун Мускаврa Раççей спорт министрĕпе Виталий Муткопа курнăçнă.**

Тĕл пулура республикăн спорт инфратытăмне аталантарас, спорт шкулĕсен ĕçне лайăхлатас ыйтусене, çавăн пекех Шупашкара никĕсленĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлассине хатĕрленмелли плана сӳтсе явнă.

Чăваш Енри спорт объекчĕсене тума 185,5 млн тенкĕ уйăрасси çинчен калаçса татăлнă. 2013 çулта Шупашкарти маунтинбайк центрĕн строительстви валли федераци бюджетĕнчен 80 млн тенкĕ, 4-мĕш хоккей СДЮСШОРне реконструкцилеме – 78 млн, Çĕнĕ Шупашкарти лаша спорчĕн шкулĕ валли – 28,5 млн тенкĕ. Республика хăй те шайлашуллă виçепе асăннă объектсем валли укça уйăрĕ. Çавăн пекех Чăваш Ен тĕп хулинчи Пăр кермен строительствине те малалла пулăшĕç.

**Уй-хир ĕçĕсемпе паллашрĕ**

## Районта – ял хуçалăх министрĕ

Иртнĕ шăмат кун пирĕн районта ĕçлĕ çул çӳревпе Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ С. Павлов пулчĕ. Сергей Владимирович кĕрхи ĕçсем епле пынипе паллашмалла район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа малтанах «Гея» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна çитрĕ. Кунта ĕçлекенсем ӳсен-тăран отраслĕне аталантарнипе пĕрлех сысна ĕрчетессипе те çанă тавăрсах тимлеççĕ. Çак тĕллевпе кунта 300 пуç сысна вырнаçмалăх вите хута янă. Малашлăха пăхса ĕçлекенскерсем Чăваш Енри ăратлăх репродукторсенчен 26 сысна ами туяннă. Ферма ĕçченĕсем вĕсем çитес уйăхра пĕрремĕш çăвăрласса кĕтеççĕ.

«ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра та, И. Никитинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче те, «Ударник» федераллă патшалăх унитарлă предприятире те ял хуçалăх министрĕ çитнĕ кун пĕтĕм вăйĕ çĕр улми пуссинчеччĕ. «Çăмăллăха кĕтсе ĕçлеместпĕр. Çавăнпа та çĕр улми пуссинче те нумаях тытăнса тăмăпăр», – терĕ «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи В. Кондратьев ял хуçалăх производствине хăйсем кĕртекен çĕнĕлĕхсемпе паллаштарнă май.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев министра каласа панинче кĕрхи уй-хир ĕçĕсене хушма вăйсем явăçтарассипе тимлени малти вырăнта пулчĕ.

С. Павлов Муркашсем йĕпе-сапаран хăраса ларманнине, пулса тухнă лару-тăрура тĕрĕс йышăнусем тунине, çак çулпах кайсан тыр-пул та, çĕр улмипе пахча çимĕç те хирте юлмасса палăртрĕ.

Тунти куна районта тыр пула 99 процент вырнă, çĕр улми 60 процента яхăн кăларнă.

**А. ПЕТРОВ.**

**Хушу**

## Пулăшусемпе, çăмăллăхсемпе тивĕçтерĕç

***Вăтă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ çывхарса килет. Çавна май кăçалхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ 499 № хушу кăларнă. Вăл Вăтă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ умĕн районти йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисен ĕçне-хĕлне мĕнле йĕркелессине çыхăннă.***

Харпăрлăх формине пăхмасăр йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен пур предприятисене те 2012 çулхи сентябрĕн 28, 29 тата 30-мĕшĕсенче хăйсен предприятийĕсенче Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе ветеранĕсенне тата инвалидĕсенне çӳç касассине тӳлевсĕр, 55 çул урлă каçнă хĕрарăмсенне тата 60 çултан иртнĕ арçынсенне хакăн 50 процентне тӳлеттерсе йĕркелеме сĕннĕ.

Кунпа пĕрлех сентябрĕн 30-мĕшĕнче мунчасенче Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе ветеранĕсене тата инвалидĕсене тӳлевсĕр, 55 çул урлă каçнă хĕрарăмсене тата 60 çултан иртнĕ арçынсене 50 процент тӳлеттерсе çăвăнтарма сĕннĕ.

**Тӳрĕ лини**

## Сирĕн ыйтусем пулсан

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх отраслĕ пирки те çавнах каламалла. Ку нумаях пулмасть кăна коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемелли çĕнĕ условисем пурнăçа кĕчĕç. Кунсăр пуçне тата çурт-йĕре хутса ăшăтмалли тапхăр çитсе килет. Ку тĕлĕшпе те ыйтусем хаçат вулакансен тупăнаççĕ пулĕ. Тирпей-илем кĕртессин ыйтăвĕ те кун йĕркинчен тухман.

Вулакансен ыйтăвĕсем çине район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата общественнăй инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Германович Никитин хуравлать. Вулакансенчен вара ыйтусем кĕтетпĕр. Вĕсене редакцие кĕртсе пама та, телефонпа 62-2-82 номерпе шăнкăравласа пĕлтерме те юрать.

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Çырăнтару – 2012**

## Хаклă вулаканăм!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2013 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Вулакансене эпир пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм 8 страницăпа тухма пуçларĕ.**

**Саламлатпăр**



Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, ырă кăмăллă хуньăсарике, ăшă чунлă асаттене, ылтăн алăллă кукаçие – Вăрманкас ялĕнче пурăнакан **Константин Иванович КИРИЛЛОВА** 80 çулхи юбилей ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

# Октябрӗн 14-мӗшӗнче Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуçлӑхне суйлатпӑр. «Единая Россия» партин Муркаш районӗнчи уйрӑмӗ ял тӑрӑхӗн пуçлӑхӗ пулма Николай Валерианович БЕЛОВА кандидата тӑратнӑ.



Николай Валерианович Белов 1967 çулхи августӑн 25-мӗшӗнче Муркаш районӗнчи Исетерккӗ ялӗнче çуралнӑ. Чӑваш. Сосновкӑри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулта сакӑр класс пӗтернӗ. 1984 çулта Чуманкассинчи вӑтам шкултан алла аттестат илсе тухнӑ. Шкул пӗтернӗ хыççӑн Чӑваш ял хуçалӑх институтне вӗренме кӗнӗ. Хӑйӗн пурнӑçне ялпа çыхӑнтарнӑ. Шкулта вӗреннӗ чухне те, каникул вӑхӑтӗнче те ял хуçалӑхне пулӑшма çӳренӗ, аслӑ пӗлӳ илнӗ хыççӑн та ялах таврӑннӑ.

Çемьеллӗ, мӑшӑрӗпе икӗ ача çитӗнтернӗ, халӗ хӗрӗсем иккӗшӗ те аслӑ пӗлӳ илеççӗ.

1986-1988 çулсенче çамрӑк каччӑ Совет çарӗнче службӑра тӑнӑ.

1990 çулта Чапаев ячӗпе хисепленекен хуçалӑхра механизатор пулса ӗçлеме пуçланӑ, тепӗр икӗ çул иртсен ӑна трактор бригадин бригадирӗ пулма уйӑрса лартаççӗ. Унта ӗçленӗ вӑхӑтра та хӑйне ырӑ енӗпе кӑтартать. Колхоз уйрӑлсан, 1996 çулта, хастар та пултаруллӑ пулнине кура ӑна Чкалов ячӗпе хисепленекен ял хуçалӑх кооперативӗнче тӗп инженер пулма çирӗплетеççӗ. 2003 çултан пуçласа 2006 çулччен «Ударник» совхозра инженер-механик ӗçне малалла тӑсать. 2006 çулхи март уйӑхӗнчен пуçласа паянччен Чкалов ячӗпе хисепленекен ял хуçалӑх производство кооперативӗнче тӗп инженерта вӑй хурать. Унӑн ӗçне тивӗçлипе хакласçӗ. Тӑрӑшса ӗçленӗшӗн район шайӗнчи грамотӑна та, Чӑваш Республикин ял хуçалӑх Министерствин грамотине те тивӗçнӗ.

Кӗçех суйлав çитет. Унта Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуçлӑхне суйламалла. Николай Валериановича «ЕДИНАЯ РОССИЯ» Партин Муркаш районӗнчи уйрӑмӗ сӗннипе кандидата тӑратнӑ. Чӑнах та ял тӑрӑхӗн пуçлӑхӗ пулма çӑмӑл мар. Анчах халӑх шанать пулсан, çак шанчӑкран тухас марччӗ. Ял хуçалӑхӗнче ӗçленӗ май кашни кунах халӑхпа пӗрле. Ял çыннине хумхантаракан, пӑшӑрхантаракан ыйтусене курса, пӗлсе тӑрать. Çав ыйтусен хуравне тупма пӗлмелле, май çитнӗ таран ял халӑхне пурӑнма условисем лайӑхлатса памалла. Ума тухса тӑракан йывӑрлӑхсене пӗччен татса параймӑн. Пӗрле, пӗр шухӑшлӑ пулсан кӑна Н. Беловӑн суйлав умӗнхи программи сирӗн ыйтусене татса парассипе никӗсленӗ. Вӑл Чуманкасси ял тӑрӑхӗнче пурӑнакан çынсем валли йӗркеллӗ пурнӑç условийӗсем тӑвассипе, ял тӑрӑхӗн аталанӑвне йӗркелесе пырассипе тачӑ çыхӑннӑ. Николай Валерианович Белова çак пысӑк, йывӑр ӗçе шанса пама пулать, вӑл ӑна тивӗçлипех пурнӑçлама пултарать. Ял халӑхӗпе, тӗрлӗ шайри ертӳçӗсемпе йӗркеллӗ хутшӑнма пӗлни ӑна кашни кун ума тухса тӑракан ыйтусене вӑхӑтра татса пама пулӑшӗç.

Хисеплӗ суйлавçӑсем! Эсир октябрӗн 14-мӗшӗнче Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуçлӑхӗ пулма Николай Валерианович Белова суйласа тӗрӗс утӑм тӑватӑр. Çакӑн пек ырӑ кӑмӑллӑ, ӑслӑ-тӑнлӑ, ӗçе пӗлсе туса пыма пултаракан çынна шанса паратӑр. Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуçлӑхӗ пулма шӑпах çакӑн пек маттур çын кирлӗ.

Материал тӳлевсӗр йӗркепе пичетленет.

**Следстви комитетӗнчен**

# Ӳсӗр пулнӑ, ют хуçалӑха кӗнӗ

Хам килте хам хуçа, теççӗ халӑхра. Раççей Федерацийӗн Конституцийӗпе çурт-йӗр уйрӑм çыннӑн саккунлӑ харпӑрлӑхӗ шутланать. Çавна май унта ирӗксӗр кӗме, хуçаланма сӑлтав çуккине çирӗплетет.

Сентябрӗн 5-мӗшӗнче пӗр арçын эрех ӗççе ӳсӗрӗлнӗ. Вӑл çирӗм виçӗ сехет иртнине те туйман пулас. Муркаш ял тӑрӑхӗнчи Çурлатринчи тепӗр çын хуçалӑхне çул тытнӑ. Вӑл, паллах, ку тапхӑр çывӑрса канмалли вӑхӑт пулнине маннӑ ӗнтӗ. Ӑна кӑна пӑхмасӑр 1990 çулта çуралнӑ çын çурт алӑкне вӑйпа уçса кӗнӗ. Çапла майпа вӑл канлӗ вӑхӑта татнӑ. Халӗ вара йӗрке хуралçисем асӑннӑ çын йӗркене пӑснине çирӗплетнӗ.

Тепӗр преступлени те çавӑн майлах. Ку ӗç Уйкас Янасал ял тӑрӑхӗнчи Васкасси ялӗнче пулнӑ. Çӳлерех асӑннӑ арçынпа пӗр çулхискер эрехпе минреме ӗлкӗрнӗ. Ирхи тӑватӑ сехетре йӗркеллӗ çынсем ыйхӑра-ха. Ку вара, вӑрӑ шухӑшлӑскер, канлӗхе çухатнӑ. Тепӗр çын хуçалӑхне вӑл ир-ирех алӑк витӗр мар, кантӑк çӗмӗрсе кӗнӗ.

Ку преступленири арçын та ыттисемпе пӗр вӑхӑтриех пулнӑ. Черкке хыççӑн черкке ӳпӗнтернӗскер, çирӗм виçӗ сехет çитессе тахçанах кӗтнӗ тейӗн. Муркаш салин Чапаев урамӗпе утаканскер мӗн шыранине тупнӑ пулас. Маларах куç хывнӑ çурт алӑкне вӑйпа туртса уçнӑ та пӗр самантрах шала кӗрсе тӑнӑ.

Çак преступленисем тӗлӗшпе çакӑн пек шухӑш çуралать. Пӗр çулхи яшсем ытти йӗркеллӗ çынсем канлӗхре пулнӑ вӑхӑтра эрехпе айкашса ют çын харпӑрлӑхне куç хывнӑ. Кӑнтӑрла, вӑй хурса ӗçлес вӑхӑтра, кусем вара мӗнпе аппаланаççӗ-ши е вӗсен пачах та урӑхла кун йӗрки? Çапла вара виçӗ преступленире те РФ УК 139 статьяри йӗркене пӑснӑ факт çителӗклӗ. Вӗсем тӗлӗшпе уголовлӑ ӗç пуçарма йышӑннӑ.

**И. ФЕДОТОВ,**
**аслӑ следователь.**

**Сире кӑсӑклантаракан ыйтусем**

***Хаçат редакцине нотариус ӗçӗ-хӗлӗпе çыхӑннӑ икӗ ыйту килчӗ.***

## Еткерлӗх хӑçан пуçланать?

**«Манӑн çывӑх тӑван виçӗ уйӑх каялла пурнӑçран уйрӑлса кайрӗ. Çавна май пирӗн еткерлӗх ыйтӑвне хускатмалла пулчӗ. Саккунпа килӗшӳллӗн еткерçӗ пуласси хӑш тапхӑртан пуçланать?»**

**Автор хӑй ятне палӑртма ыйтмарӗ.**

***Асӑннӑ ыйту çине Чӑваш Республикин Муркашри нотариальнӑй округӑн нотариусӗ Павел Иванович Шлаев хуравлать.***

– Еткерлӗх вӑл – пурлӑх тепӗр çын тытӑмне куçни. Ӑна куçарасси халалпа тата саккунпа пурнӑçланать. Еткерлӗхе пуçарасси çын вилнипе çыхӑннӑ. Вӑл пурнӑçран уйрӑлнӑ кунран тытӑнса саккунпа килӗшӳллӗн çак ӗç пуçланать те. Еткерлӗхе хӑш вырӑнта уçасси вилнӗ çыннӑн юлашки тапхӑрти яланлӑх вырӑнӗ шутланать.

Еткерлӗхе ӑна уçнӑ кун тӗлне шутланнӑ пурлӑх, ун тӗлӗшӗнчи право тата тивӗç кӗрет. Харпӑр хӑйне кӑна пырса тивекен самантсем (алимент тӳлесси, тепӗр çын пурнӑçӗпе сывлӑхне сиен кӳнине саплаштарасси) еткерлӗх шутне кӗмеççӗ.

## Нотариус миçе тӗрлӗ ыйтупа йышӑнать?

– Нотариус саккунпа килӗшӳллӗ çирӗм тӗслӗ нотариаллӑ ӗç-хӗл пурнӑçлать. Кунта тӗрлӗ фактлӑ, правaллӑ граждансен саккунлӑ интересӗсене хӳтӗлекен, çирӗплетекен документсем кӗреççӗ.

Вӑл е ку ӗç-хӗле пурнӑçличчен нотариус кашни документа тӗплӗн тишкерет, вӗсен пӗлтерӗшӗпе граждансене паллаштарать. Тӗслӗхрен, еткерлӗх документне йӗркеленӗ чухне кашни енӗн шухӑш-кӑмӑлне шута илет, кунта ирӗксӗрлени, хӗсӗрлени çуккине пӗтӗмлетет. Нотариус кашни енӗн интересӗсене хӳтӗлет, адвокат – хӑй клиентне.

Енчен те сирӗн нотариус ӗçӗ-хӗлӗпе çыхӑннӑ тӗрлӗ ыйту çуралчӗ пулсан çак адреспа килме пултаратӑр: Муркаш сали, Ленин урамӗ, 38-11 № çурт, телефон номерӗ 883541 (62165).

**Экономика хӑрушсӑрлӑхӗ пирки**

# Çакна эсир пӗлме тивӗç

***Телевиденипе час-часах халӑх хушшинчи хутшӑнура суя укçасем тухни пирки хыпарлаççӗ. Кунашкал тӗслӗх пирӗн районта пур-и? Çакна та пӗлес килет, Муркаш районӗнче ӗç вырӑнӗпе усӑ куракансене саккунпа ответ тыттарасси еплерех пулса пырать?***

**В. ИВАНОВ.**
Ильинка ял тӑрӑхӗ.

Вулавçӑ ыйтӑвӗсене уçӑмлатма эпир Раççей Федерацийӗн Шалти ӗççен министерствин Муркаш районӗпе ӗçлекен пайӗн экономика хӑрушсӑрлӑх тата коррупципе кӗрешес пай специалисчӗсемпе тӗл пултӑмӑр. Халӗ вӗсене сӑмах паратпӑр.

# Суя укçа пирки

2012 çулхи çурла уйӑхӗн 28-мӗшӗнче 13 сехет те 34 минутра Раççей Федерацийӗн Шалти ӗççен министерствин Муркаш районӗпе ӗçлекен пайӗн дежурнӑй частьне Шупашкарти Наци банкӗнчен шӑнкӑрав пулчӗ. Сӑлтавӗ: Юнкӑпуçӗнче вырнаçнӑ «Лидер» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн 112-мӗш номерлӗ автозаправка станцийӗнчен вӗсем патне 5000 тенкӗлӗх суя укçа пынӑ. Ку хыпар пирки следстви пайӗн аслӑ следователӗпе Л. Рузмикинӑпа, полицин участокри аслӑ участковӑйӗпе И. Петровпа çийӗнчех вырӑна çитрӗмӗр.

Суя укçа хуçине тупас тӗллевпе заправкӑра ӗçлекен операторпа тата кассир-операторпа калаçу ирттертӗмӗр. Ку ӗçпе шырав ӗçӗ малалла пырать. Районта пурӑнакансене тата суту-илӳре ӗçлекенсене ют çын аллинчен 500, 1000, 5000 тенкӗлӗх укçасем илнӗ чух уйрӑмах асӑрхануллӑ пулма ыйтатпӑр. Иккӗленӳ пулсан çав çын пирки ытларах пӗлсе юлса çийӗнчех пирӗнпе çыхӑнма сӗнетпӗр.

**И. ИЛЛАРИОНОВ,**
**экономика хӑрушсӑрлӑх тата коррупципе кӗрешес пайӑн аслӑ оперуполномоченнӑйӗ.**

# Штраф хӑй тӳлемен

Предприятире ӗçлекенсем е пӗр-пӗр çынна çывӑх пӗлекенсем хӑйсен ертӳçи тӑвакан тӗрӗс марлӑха алӑ тупанӗ çинчи пекех кураççӗ. Тепӗр чух çав хыпарсем пирӗн патӑмӑра та çитеççӗ. Çавнашкал пӗр хыпара тӗрӗсленӗ чух нумаях пулмасть районти пӗр унитарлӑ предприяти пуçлӑхӗ хӑй тунӑ айӑпшӑн тӳлемелли суммӑна хуçалӑх касси урлӑ тӳлени çиеле тухрӗ. Ӗçӗ вара çапла пулнӑ.

Икӗ çул каяллах çав ертӳçӗне çул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекторӗсем çул-йӗр правилине пӑснӑшӑн административлӑ майпа айӑплама протокол çырнӑ. Айӑпланакан турткаланса тӑман, штрафа çийӗнчех тӳленӗ, анчах... Административлӑ айӑплав сумми шӑппӑн çеç вӑл ертсе пыракан предприяти кассинчен вӗççе тухса кайнӑ. Ӑна вара каярахпа йӑлана кӗнӗ авансла отчетпа шутран кӑларнӑ.

Вӗрен, темӗн чухлӗ явӑнсан та, вӗçӗ пулатех тенӗ евӗр, иртнӗ кунсенче çакӑ тӑрӑ шыв çине тухрӗ. Халӗ ку ӗç тӗлӗшпе предприяти укçи-тенкине салатса пӗтерни тесе уголовлӑ ӗç пуçартӑмӑр.

Харпӑр хӑй айӑплавне предприяти касси урлӑ саплаштарас текенсен шутласа пӑхма вӑхӑт пур.

**А. СРЕТИНСКИЙ,**
**экономика хӑрушсӑрлӑх тата коррупципе кӗрешес пай оперуполномоченнӑйӗ.**

**Пирӗн пата çыраççӗ**

# Сывлӑх хуралçисем – ырӑ тӗслӗх

Паянхи пурнӑçра халӑх сывлӑхӗшӗн чӑнласах тӑрӑшни яр уççӑн курӑнать. Туберкулез, ӳпкепе чӗре, тӗрлӗрен шыçӑ чирӗсем сарӑлса ан кайччӑр тесе сывлӑх хуралçисем радиопа, телевизорпа час-часах тухса калаçнине итлетпӗр, хаçат-журналсенче сывлӑх темипе çырнӑ статьясене вулатпӑр.

Халӑх сывлӑхӗшӗн яваплӑ çынсем пульницӑсене вӑхӑтра пырса çӳресе организма тӗрӗслеттерсех тӑма ыйтаççӗ. Сывлӑха упрама тӗрлӗрен сӗнӳсем парассине те хӑйсен тивӗçӗ тесе пурнӑçлаççӗ.

Сывлӑх сыхлавне кун йӗркинче тытма наука та аталансах пырать. Пульницӑсем паян сывлӑха тӗрӗслесе вӑхӑтра диагноз лартма çӗнӗрен те çӗнӗ электронлӑ аппаратсем туянаççӗ.

Темиçе çул ӗнтӗ ялсене куçса çӳрекен флюорографи кабинечӗсем çӳреме пӑрахнӑччӗ. Юлашки çулсенче çак ырӑ ӗç те çӗнӗрен вӑй илчӗ. Çурла уйӑхӗнче районти ялсенче туберкулезпа кӗрешекен Шупашкарти диспансерӑн çӗнӗ йышши машинисем çынсен сывлӑхне тӗрӗслесе çӳрерӗç. Çуткӳлте пурӑнакансен сывлӑхне тӗрӗслесе тухнӑ хыççӑн çурла уйӑхӗн 10-мӗшӗнче çав машинӑсемпе ӗçлекен сывлӑх хуралçисем Мӑн Токшик ялне те çитрӗç. 3–4 сехет хушшинче вӗсем ялта пурӑнакан 77 çыннӑн сывлӑхне тӗрӗслесе пӗтӗмлетӳ туса пачӗç.

– Тупӑнчӗç-и пирӗн ялта хӑрушӑ чир паллисем? – кӑсӑклантӑм рентгенолаборантран.

Компьютер умӗнче ларакан Станислав Гербертович Смирнов ман çине кӑмӑллӑ пӑхса хуравларӗ:

– Чир тӗлӗшпе хӑрушлӑх çук. Пурте йӗркеллӗ.

Сывлӑх хуралçин çак хуравӗ мана савӑнтарчӗ, ялӑн малашлӑхӗ пуррине çирӗплетрӗ.

Ял çыннисене флюорографи ирттернӗ кун халӑхпа ӗçленӗ çӗрте флюорографи кабинетне вырӑнтан вырӑна илсе çӳрекен А. Александров водитель, Турайри пӗтӗмӗшле врач практикин уйрӑмӗн медицина сестрисем Н. Орловӑпа Ф. Харитонова ырӑпа палӑрчӗç. Ял халӑхӗн тав сӑмахне Мӑн Токшикри И. Чернышова фельдшерпа ӑна пулӑшакан З. Александрова та тивӗç пулчӗç. Васкавлӑ пулӑшу машини çинче ӗçлекен С. Миронов та хӑйне шанса панӑ ӗçре вӑхӑтлӑ пулӑшу пама яланах хатӗр пулнине çирӗплетрӗ.

Ял çыннисем хӑйсен сывлӑхне вырӑна тухсах тӗрӗсленишӗн питӗ кӑмӑллӑ юлчӗç. Мӗншӗн тесен сывлӑх хуралçисем хӑйсен ӗçӗпе ялта пурӑнакансемшӗн ырӑ тӗслӗх пулса тӑчӗç. Ялта пурӑнакансем кунашкал тӗрӗслевсем малашне те пуласса шанаççӗ. Мӗншӗн тесен çак кун ватти те, вӗтти те район центрне кайса вӑхӑт çухатса çӳремерӗ.

**Рим НИКИТИН.**

Мӑн Токшик ялӗ.

**Протокол**

**ПРОТОКОЛ**
**публичных слушаний по изменению вида разрешенного использования земельного участка.**

24 сентября 2012 года. Начало в 10 часов 00 минут по московскому времени.

Здание администрации Ильинского сельского поселения, 429545, Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Тренькино, ул. Новая, д.5.

Присутствовали:

Президиум: Перцев Ю.В. - Глава администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

Далее по списку: (см. приложение).

Повестка дня:

Об изменении вида разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:030201:173.

Перцев Ю.В. – открыл публичные слушания.

Слушали:

Перцев Ю.В. – сообщил о поступившем заявлении от гражданки Блиновой Людмилы Николаевны. Прошу изменить вид разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:030201:173 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д.Мемеккасы, улица Новая, д.126 с разрешенного использования для огородничества общей площадью 1500 кв.м на вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства».

Решили:

1. Одобрить проект постановления по изменению вида разрешенного земельного участка с кадастровым номером 21:17:030201:173

2. Результаты публичных слушаний в течении 7 дней опубликовать в газете «Знамя победы» и на сайте администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

Перцев Ю.В. подвел итоги публичных слушаний, объявил их закрытыми.

**Председатель публичных слушаний – глава администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Ю.В. ПЕРЦЕВ.**
**Секретарь публичных слушаний – специалист 1 разряда Е.А. ВОЛКОВ.**

Приложение к протоколу
публичных слушаний от 24.09.2012 года

**СПИСОК**
**граждан, принявших участие на публичных слушаниях по изменению вида разрешенного использования земельного участка 24 сентября 2012 года.**

| № | ФИО. |
|---|---|
| 1 | Перцев Юрий Викентьевич; |
| 2 | Силантьева Галина Николаевна; |
| 3 | Соколова Инна Геннадьевна; |
| 4 | Волков Евгений Алексеевич; |
| 5 | Блинова Людмила Николаевна; |
| 6 | Яртеев Александр Николаевич. |

Спорт

## Çĕнтерӳпе таврăннă

Сентябрĕн 21–23-мĕшĕсенче Çĕрпӳ районĕнче Чăваш Республикин «Урожай» физкультурăпа спорт пĕрлешĕвĕн бокс енĕпе ăмăрту иртнĕ. Унта Муркаш пултарулла çамрăкĕсем те хутшăннă.

«Алексей Корчагинпа Николай Скворцова ăмăртăва илсе кайрăмăр та икĕ çĕнтерӳçĕ каялла илсе килтĕмĕр», – шӳтлесерех савăнăçне палăртать спортсменсен аслă тренерĕ Сергей Черкашин.

Алексей 57 кг категори виçинче, Николай 64 кг категори виçинче кĕрешнĕ, иккĕшĕ те ылтăн медаль çĕнсе илме пултарнă. Хастар çамрăксемпе районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тепĕр тренерĕ Олег Сютруков та занятисем ирттерет. Апла çак çĕнтерӳсенче кашнийĕнех тӳпи пур.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

## Сообщение Главного управления МЧС России по Чувашской Республике

**27 сентября в 9 час. 30 мин. будут проверены электросирены системы оповещения. Просьба к населению во время звучания электросирен не прерывать своих занятий и работ.**

Постановление

**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА МОРГАУШСКИЙ РАЙОН**
**АДМИНИСТРАЦИЯ БОЛЬШЕСУНДЫРСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**24.09.2012 г. № 93**
**село Большой Сундырь**

**О проведении внесении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст.14 Устава Большесундырского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:060402:264 15 октября 2012 года в 10 часов 00 минут в администрации Большесундырского сельского поселения, по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Б. Сундырь, улица Советская 16.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ»

**Глава администрации Большесундырского сельского поселения А.В. ЛАПТЕВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п. 10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учётом результатов публичных слушаний администрация района постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:060402:264 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, улица Новая, с разрешенного использования «для строительства и содержания торгового павильона» общей площадью 31 кв.м. на «для строительства и эксплуатации магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 15.10.2012 года до 9-00 часов.

**Глава администрации Большесундырского сельского поселения А.В. ЛАПТЕВ.**






## Пĕлтерӳсем. Объявления

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Федоров Геннадий Пантелеймонович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, с. Чуманкасы, ул. Советская, дом 1.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, общей площадью 1,27 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Чернов Емельян Ферапонтович, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, д. 38/2, кв. 54.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Новая Юнга», земельный участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:080901, общей площадью 3,16 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**29 сентября открывается сельскохозяйственная ярмарка по продаже сельхозпродукции в д. Москакасы. Начало в 10 часов. Приглашаются все желающие, готовые реализовать сельхозпродукцию.**

* * *

**Январьте тăваттăмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă пуçлă ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-849-74-96.**

* * *

**Продаю ВАЗ-21723 2008 года выпуска. Один хозяин, литые диски, музыка Pioneer, цвет – кварц. Зимняя резина в подарок! Тел: 8-927-665-59-00. 1-2.**

* * *

**Декабрь уйăх вĕçĕнче иккĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-952-024-48-52.**

* * *

**Продаю дом в д. Шептаки Моргаушского сельского поселения. Газовое отопление, участок 42 сот, ровный. Дом изнутри обшит ДСП, бревенчатый.**
**Тел.: 8-927-855-35-15. 2-2.**

* * *

**Тăваттăмĕш пăруламалли шăши тĕслĕ (швицки) ĕне сутатăп. Тел.: 8-965-686-03-21.**

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 8-10.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру пл. 40,8 кв. м. с индивидуальным отоплением по ул. Парковая, 4.**
**Тел.: 8-905-347-58-15.**

* * *

**Кашни эрне кун çĕнĕ пасара кĕнĕ çĕрте тасатнă кĕрхи сурăх çăмне илетпĕр. Хакĕ: шурри 1 кг – 100 тенкĕ; хури – 80 тенкĕ; кăвакки – 60 тенкĕ. Çăматăсем сутатпăр. 8-00 – 10.00 сехетчен. Тел.: 8-960-311-22-86.**

* * *

**Октябрĕн 3-мĕшĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хурашурă ĕне сутатпăр. Тел.: 8-906-131-60-25.**

* * *

**Октябрь çурринче пăруламалли хура тынашка сутатăп. Мăн Токшик ялĕ. Тел.: 8-960-313-08-56.**

* * *

**Продаю мелкий, семенной, продовольственный картофель, также трактор Т-30 2005 года выпуска, косилку сегментную, плуг, культиватор.**
**Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90. 1-2.**

* * *

**Продаю ВАЗ-21140 2007 года выпуска, в отличном состоянии. Недорого. Тел.: 8-927-853-02-94.**

* * *

**Большесундырскому райпо срочно требуются повара для работы в кафе «Шуçăм» с. Большой Сундырь. Обращаться в отдел кадров райпо, телефон: 69-5-46. 1-2.**

**Октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Калайкасси ялĕнче çăм арманĕ ĕçлеме пуслать. Кану кунĕсĕр. Тел.: 8-908-306-00-34. 1-2.**



**28 сентября в РДК с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:091101:171, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:091101, для возведения хозяйственных построек, площадью 17 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:615, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул. Новая, для установки временных сооружений, площадью 17 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060406:115, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул. Заводская, для установки временных сооружений, площадью 35 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060406:116, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул. Заводская, для установки временных сооружений, площадью 132 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070301:265, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5311 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1271, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060401:568, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, для строительства и содержания зданий и сооружений, площадью 142 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**


**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.**


Коллектив СПСК «Агронефтепродукт» выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой – безвременной кончиной директора ФГУП «Ударник»

**ДАВЫДОВА**
**Платона Павловича.**

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх «Ударник» хуçалăх директорĕ

**Платон Павлович**
**ДАВЫДОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе таркăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Ильинкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта акăлчан чĕлхине вĕрентекен О.Г. Донсков учителĕн юратнă ывăлĕ

**ВИКТОР**

вăхăтсăр вилнĕ пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта ПЭВМ операторĕнче ĕçлекен Н.О. Степановăн

**АШШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн, тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Прогноз погоды

| | среда 26 сентября | | | | четверг 27 сентября | | | | пятница 28 сентября | | | | суббота 29 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +8 | +10 | +12 | +11 | +10 | +10 | +13 | +8 | +7 | +10 | +16 | +16 | +13 | +11 | +12 | +11 |
| Давление мм | 739 | 741 | 744 | 745 | 747 | 748 | 750 | 751 | 750 | 749 | 745 | 742 | 744 | 747 | 748 | 748 |
| Влажность % | 95 | 100 | 86 | 88 | 91 | 95 | 65 | 88 | 91 | 81 | 77 | 86 | 89 | 88 | 74 | 84 |
| Ветер м/сек | 3 | 2 | 6 | 5 | 5 | 5 | 4 | 2 | 2 | 6 | 7 | 8 | 7 | 5 | 6 | 4 |
| | Ю-З | З | З | З | З | З | С-З | З | Ю-З | Ю | Ю | Ю-З | З | С-З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 06:47 | 18:40 | | | 06:49 | 18:37 | | | 06:51 | 18:34 | | | 06:53 | 18:32 | |
| Луна восход / заход | | 17:00 | 02:11 | | | 17:17 | 03:30 | | | 17:33 | 04:47 | | | 17:49 | 06:02 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 25.09.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4678.